Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи майӑн 5-мĕшĕнченпе тухать

76 (7501) № * Шӑмат кун, 2007 ҫулхи сентябрĕн (авӑн) 15-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Сентябрĕн 16-мĕшĕ – Вӑрман ĕҫченĕсен кунĕ

**ВӐРМАН ХУҪАЛӐХĔН ТАТА ВӐРМАН ПРОМЫШЛЕННОҪĔН КОМПЛЕКСĔН ХИСЕПЛĔ ĔҪЧЕНĔСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

**Сире профессиӗ уявĕ ячĕпе саламлатӑп!**

Вӑрман - ҫут ҫанталӑкӑн виҫесĕр пуянлӑхĕ, наци сывлӑхĕн никĕсĕ тата республикӑн экономика ӳсĕмĕн хӑватлӑ вайĕ.

Чӑваш Енĕн вӑрман промышленноҫĕн комплексĕнче паян инноваци проекчĕсене, йывӑҫа пĕтĕмĕшле усӑ курма май паракан ҫĕнĕ технологисене вӑя кĕртесҫĕ, производствӑна ҫĕнетсе улӑштарма хывакан инвестици ӳсет. Вӑрман промышленноҫĕн предприятийĕсем "Раҫҫей гражданĕсене – хаклӑ мар тата меллĕ сурт-йĕр" наци проектне пурнӑҫлас ĕҫе активлӑ хутшӑнаҫҫĕ.

Республикӑра уйрӑмах вӑрмана чĕртессипе нумай ĕҫлеҫҫĕ. Вӑрман фондне упрассинче тата ӳстерсе ларассинче вӑрман ĕҫченĕсен кӑна мар, чӑваш ҫĕрĕ ҫинче пурӑнакан мĕн пур граждансен тӳпи пысӑк.

Вӑрман ĕҫченĕсен профессионализмĕ, опычĕ, хӑйсен ĕҫне чунтан парӑнни тата тӑван тавралӑха юратни вӑрман пуянлӑхĕпе тухӑҫлӑ усӑ курма тата отрасль ĕҫĕн эффективлӑхне ӳстерме май парасса шанса тӑратӑп.

Пурне те ҫирĕп сывлӑх, ӑнӑҫу, телей тата тулӑх пурнӑҫ сунатӑп!

**Чӑваш Республикин Президенчĕ Н.В. ФЕДОРОВ.**

**ВӐРМАН ĔҪĔНЧЕ ВӐЙ ХУРАКАН ХИСЕПЛĔ ĔҪЧЕНСЕМ, ҪАК ОТРАСЛĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ, ҪУТ ҪАНТАЛӐК ТУСĔСЕМ!**

Сире Вӑрман ĕҫченĕсен кунĕ ячĕпе пĕтĕм чун-чĕререн саламлатӑп. Йывӑҫ лартса ӳстерсе тӑван тавралӑха илемлетесси – ҫав тери пархатарлӑ ĕҫ. Вĕҫĕ-хĕррисĕр чун ӑшши, тӑрӑшулӑх кирлĕ ҫакна валли. Эсир тӑрӑшнипе пирĕн тӑрӑхри вӑрмансем тасарах та пуянрах пулаҫҫĕ. Хӑвӑрӑн пархатарлӑ ĕҫĕрпе эсир ҫитĕнекен ӑрӑшӑн ырӑ тĕслĕх пулса тӑратӑр.

Вӑрман - ҫут ҫанталӑкӑн калама ҫук хаклӑ парни. Ӑна упрасси тата пуянлатасси кашни ҫыннӑн кулленхи тивĕҫĕ пулнине ырми-канми ĕҫĕрпе ҫирĕплетсе паратӑр. Ҫак ĕҫре эсир малашне те пĕтĕм чун хавалĕпе тӑрӑшасса эпĕ шансах тӑратӑп.

Вӑрман – халӑх пуянлӑхĕ. Вӑл хӑй тĕллĕн – этем ӑшшисĕр, тӑрӑшулӑхсӑр – ҫитĕнмест, аталанса ӳсмест. Эсир ҫакна ӑнланса, чун-чĕрепе туйса тӑратӑр. Кулленех кашни ҫынна кирлĕ ĕҫе чыслӑн пурнӑҫлатӑр, ҫак ĕҫе ыттисене явӑҫтаратӑр. Тавах сире ҫакӑншӑн. Эсир малалла та тӑрӑшуллӑ пуласса шанса тӑратӑп. Ҫавӑн пекех районти кашни ҫын тӑван Муркаш Ен илемĕшĕн ытларах тӑрӑшасса, тӑван ҫĕре юратнине пархатарлӑ ĕҫпе ҫирĕплетессе ĕненетĕп.

Сире, сирĕн ҫемйĕрсене ҫирĕп сывлӑх, ӑнӑҫу, телей, вӑрӑм кун-ҫул сунатӑп.

**Район пуҫлӑхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

## Ĕҫлĕ ҫул ҫӳрев

# Раҫҫей Президенчĕ В.Путин Чӑваш Республикинче пулчĕ

Юн кун 17 сехет те 30 минутра Шупашкар аэропортне Раҫҫей Президенчĕн Владимир Путинӑн самолечĕ анса ларчĕ. Ҫĕршыв пуҫлӑхне Раҫҫей Президенчĕн Атӑлҫи федераци округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Александр Коновалов, республика Президенчĕ Николай Федоров, Раҫҫей Федерацийĕн Федераци Пухӑвĕн Патшалӑх Думин Тĕнчери ĕҫсен комитечĕн председателĕ Константин Косачев, ЧР Патшалӑх Канашĕн Председателĕ Михаил Михайловский, официаллӑ ытти ҫынсем кĕтсе илчĕҫ.

В.В. Путинпа пĕрле Чӑваш Ене РФ пĕрремĕш вице-премьер ĕҫĕсене туса пыракан Дмитрий Медведев килсе ҫитрĕ.

Раҫҫей регионĕсем тӑрӑх ĕҫлĕ ҫӳреврe Владимир Путин Чӑваш Енре "Вĕрентӳ" тата "Сывлӑх сыхлавĕ" приоритетлӑ наци проекчĕсем мĕнле пурнӑҫланнипе паллашрĕ.

Ҫĕршыв пуҫлӑхне регион ҫитĕнĕвĕсем ҫинчен каласа панӑҫ, Шупашкар районĕнчи





Тренькассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вӑтам шкулпа паллаштарчĕҫ. Ку шкул 2007 ҫулта "Вĕрентӳ" наци проекчĕн шайĕнче Раҫҫей Федерацийĕн Президенчĕн 1 миллион тенкĕлĕх патшалӑх пулӑшӑвне илнĕ. Икĕ вĕрентекен 100-шер пин тенкĕлĕх хавхалантару премине тивĕҫнĕ. Класс ертӳҫисене (16 ҫын) кашни уйӑхра пĕрер пин тенкĕ парса хавхалантараҫҫĕ. Президент гранчĕпе шкул кусса ҫӳрекен компьютер класĕ, 3 интерактив проектор туяннӑ. Вĕрентекенсен ӑсталӑхне ӳстерме 50 пин тенкĕ ытла уйӑрнӑ. Ҫитес вӑхӑтра компьютер лингафон пӳлĕмне туянаҫҫĕ (335 пин тенкĕлĕх).

Владимир Путин шкулта Чӑваш Енпе Чечен Республикинчи, Белгород, Калининград облаҫĕсенчи шкулсен представителĕсемпе интернет урлӑ иртнĕ конференцие хутшӑнчĕ.

Ĕҫлĕ визит программипе килĕшӳллĕн В.В. Путин сывлӑх сыхлавĕн "Президентӑн перинаталь центрĕ" патшалӑх учрежденийĕпе, Шупашкар хулинчи П.Н. Осипов ячĕллĕ пĕрремĕш больницӑн пĕтĕмĕшле врач практикин уйрӑмĕпе паллашрĕ, Чӑваш Республикин Президенчĕпе калаҫусем ирттерчĕ.

**Л. АЛЕКСЕЕВ.**

**Сӑн ӳкерчĕксенче: ĕҫлĕ визит саманчĕсем.**

## Блиц-интервью

# Декабрĕн 2-мĕшĕнче – хушма суйлавсем

***Раҫҫей Федерацийĕн Президенчĕ В.В. Путин «Раҫҫей Федерацийĕн Федераллӑ Пухӑвĕн Патшалӑх Думин депутачĕсен суйлавĕ ҫинчен» 51-мĕш номерлĕ Федераллӑ саккунпа килĕшӳллĕн ҫĕнĕ Патшалӑх Думин депутачĕсен суйлавне кӑҫалхи декабрĕн 2-мĕшĕнче ирттересси ҫинчен указа алӑ пуснӑ. Кунпа пĕрлех районта хӑшпĕр суйлав округĕсемпе депутатсен районти Пухӑвĕн депутачĕсене тата депутатсен ял тӑрӑхĕсенчи Пухӑвĕсен депутачĕсене ҫĕнĕрен суйламалла пулать. Мĕнпе ҫыхӑннӑ ҫакӑ? Кун пирки эпĕ район администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕҫтерессин тата вырӑнти самоуправлени органĕсемпе ĕҫлекен пайĕн пуҫлӑхне Лилия Юрьевна ТАРАСОВАНА тĕплĕнрех каласа пама ыйтрӑм.***

– Кунта ҫĕнни нимĕн те ҫук. Суйлав ирттерессипе ҫыхӑннӑ саккунсемпе килĕшӳллĕн депутата суйланӑ ҫын ку е вӑл сӑлтава пула хӑйĕн тивĕҫĕсене пурнӑҫлама пултараймасть, урӑх вырӑна пурӑнма е ĕҫлеме тухса кайнӑ, ун тĕлĕшпе суд йышӑнӑвĕ пур пулсан, ҫĕре кĕрсен е ытти шута илмелли сӑлтавсем чухне хушма суйлав ирттерме тивет. Акӑ 1-мĕш номерлĕ пĕр мандатлӑ Октябрьски суйлав округĕпе декабрĕн 2-мĕшĕнче хушма суйлав ирттермелле пулать. Сӑлтавĕ – саккунпа В.Г. Данилов пĕр харӑсах депутатсен районти Пухӑвĕн те, Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашĕн те депутачĕ пулма пултараймасть. Ҫапла вара асӑннӑ 1-мĕш номерлĕ Октябрьски суйлав округĕпе пуҫне 7-мĕш номерлĕ Мӑн Тутаркасси суйлав округĕпе те депутатсен районти Пухӑвне депутатсем ҫĕнĕрен суйламалла. 7-мĕш номерлĕ округпа депутат ҫĕнĕрен суйлассипе А.Н. Пихтеров тĕлĕшпе суд приговорĕ пулнипе ҫыхӑннӑ. Кун пирки депутатсен районти Пухӑвĕн черетсĕр 20-мĕш ларӑвĕ сентябрĕн 7-мĕшĕнче тивĕҫлĕ йышӑну турĕ.

**– Хӑш суйлав округĕсемпе депутатсен ял тӑрӑхĕсен Пухӑвĕсен депутачĕсене ҫĕнĕрен суйламалла пулать-ха?**

Кун пек округсем 5. Муркаш ял тӑрӑхĕпе 5-мĕш номерлĕ Ҫурҫĕр, Турай ял тӑрӑхĕпе 10-мĕш номерлĕ Тушкасси, Юнкӑ ял тӑрӑхĕпе 10-мĕш номерлĕ Канаш, Ярапайкасси ял тӑрӑхĕпе 4-мĕш номерлĕ Иштерек, 8-мĕш номерлĕ Кӳстерек суйлав округĕсемпе депутатсен ял тӑрӑхĕсен Пухӑвĕсен депутачĕсене суйламалла.

**– Депутатсем хӑйсен черетсĕр ларӑвĕнче Чӑваш Республикинчи Тĕп суйлав комиссине районти муниципаллӑ суйлав комиссийĕсен полномочийĕсене районти территори суйлав комиссийĕ ҫине хума ыйтасси пирки те сӳтсе явнӑччĕ.**

– Ҫакӑ вӑл суйлав ирттерессипе ҫыхӑннӑ тӑкаксене чакарассипе ҫыхӑннӑ. Чӑн та депутатсен районти Пухӑвĕ Чӑваш Республикинчи Тĕп суйлав комиссине муниципаллӑ суйлав комиссийĕсен полномочийĕсене Муркаш районĕнчи территори суйлав комиссийĕ ҫине хурассин ыйтӑвĕпе тухрĕ. Тĕп суйлав комиссийĕ депутатсен ыйтӑвне тивĕҫтерчĕ. Апла пулсан суйлава хатĕрленме ирттерес ĕҫсене туса пырасси, вӑл шутра участоксенчи суйлав комиссийĕсене йĕркелесси, кандидатсене регистрацилесси, бюллетеньсем хатĕрлесси, сасӑлав итогĕсене пĕтĕмлетесси пĕтĕмпех территори суйлав комиссийĕн тивĕҫĕ шутланать.

**– Лилия Юрьевна, суйлавпа ҫыхӑннӑ ыйтусемпе ӑҫта пыма пулать?**

– Ҫитес суйлава хатĕрленсе ирттерессипе ыйтусем пулсан, сире Муркаш районĕнчи территори суйлав комиссийĕ район администрацийĕн ҫурчĕн 308-мĕш пӳлĕмĕнче йышӑнĕҫ. Ыйтса пĕлмелли телефонсем: 2-16-47 тата 2-14-37.

**В. ШАПОШНИКОВ калаҫнӑ.**

***Чӑваш Республикин Президенчĕн Указĕ***

### Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн ҫумĕ – Чӑваш Республикин культура, национальноҫсен ĕҫĕсен, информаци политикин тата архив ĕҫĕсен министрĕ ҫинчен

Чӑваш Республикин Конституцийĕн 72 статйин 6-мĕш пунктне тĕпе хурса **ҫапла йышӑнатӑп**:

1. Наталья Ивановна Володинӑна Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн ҫумĕ – Чӑваш Республикин культура, национальноҫсен ĕҫĕсен, информаци политикин тата архив ĕҫĕсен министрĕ пулма уйӑрса лартас.
2. Ҫак Указ ӑна алӑ пуснӑ кунран вӑя кĕрет.

**Чӑваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.**

Шупашкар, 2007, авӑн, 12, 76 №.

**Наталья Ивановна Володина 1958 ҫулта ҫуралнӑ. 1982 ҫулта Мускаври М.В. Ломоносов ячĕллĕ патшалӑх университечĕнчен вĕренсе тухнӑ, "журналист, литература редакторĕ" специальноҫе алла илнĕ. 1999 ҫулта "менеджмент" специальноҫпа Чӑваш патшалӑх университетне пĕтернĕ. Журналист ĕҫ-хĕлне Чита облаҫĕнчи район хаҫачĕнче пуҫланӑ. МПУ хыҫҫӑн Шупашкара куҫса килнĕ, Чӑваш патшалӑх университечĕн 10 ҫул ĕҫленĕ, "Ульяновец" хаҫат редакторĕ пулнӑ, ҫарах республикӑри ҫамрӑксен "Человек" журналне кӑларнӑ. 1994-1996 ҫулсенче Чӑваш Республикин Президенчĕн пресс-службине ертсе пынӑ. 1996-1999 ҫулсенче "Чӑваш Ен" патшалӑх телекурав тата радиохыпарлав компанийĕн председателĕ. 1999-2002 ҫулсенче – Чӑваш Ен Президенчĕн пулӑшуҫи. 2002 ҫулхи кӑрлач уйӑхĕнче Чӑваш Ен Правительствин Председателĕн ҫумне – пичет тата информаци политикин министрне ҫирĕплетнĕ. 2003 ҫултан 2004 ҫулччен – вице-премьер, Чӑваш Ен Президенчĕн Администрацийĕн Ертӳҫи. Хӑйĕн ирĕкĕпе 2004 ҫулхи ҫурла уйӑхĕнче отставкӑна кайнӑранпа паянхи кунччен Мускавра медиа бизнес енĕпе ĕҫленĕ, ҫав вӑхӑтрах обществӑлла йĕркепе Чӑваш Республикин Президенчĕн канашҫи пулнӑ.**

**Раҫҫей Федерацийĕн культурӑн тава тивĕҫлĕ ĕҫченĕ, Раҫҫей президенчĕсен Борис Ельцинӑн тата Владимир Путинӑн Тав сӑмахне тивĕҫнĕ. Унӑн икĕ ывӑл тата пĕр мӑнук.**

## Раҫҫейре

# Октябрьте пенси ӳсет

Патшалӑх Думин депутачĕсем октябрĕн 1-мĕшĕнчен пенси укҫине ӳстерме Ĕҫ пенсийĕ ҫинчен саккуна улшӑнусем кĕртнĕ. Саккун ватӑлнипе паракан ĕҫ пенсине, инвалида тухнипе тата тӑрантаракана ҫухатнипе паракан пенсисене ӳстерет. Ĕҫ пенсийĕн тĕп бази малашне 1 пин те 260 тенкĕпе танлашать. Ҫакӑр вунӑ ҫул урлӑ каҫнисен вӑл 2 пин те 520 тенке ҫитет. Инвалида тухнипе паракан пенсисен тĕп бази 2 пин те 520 тенкĕ (3 степеньлисен), 1 пин те 260 тенкĕ (2 ст.), 630 тенкĕ (3 ст.) пулать.

Пенсин тĕп базине ҫапла майпа иккĕмĕш хут ӳстереҫҫĕ. Пĕрремĕш хут 2005 ҫулта хӑпартнӑччĕ. Ҫитес икĕ ҫулта пенсин тĕп базине 65 процент таран пысӑклатма палӑртаҫҫĕ. Ҫапла майпа пенсие пурӑнмалли чи пĕчĕк минимумпа танлаштарасшӑн.

Октябрь уйӑхĕчен ҫĕршыври пенсин вӑтам виҫи 1 пин те 254 тенкĕпе танлашнӑ пулсан, халĕ вӑл 166 тенкĕ ӳсет.

Пенсие пысӑклатма хуснаран октябрь уйӑхĕнче 8 миллиард тенкĕ хушма укҫа уйӑраҫҫĕ.

## Информаци кунĕ

# Ял ҫыннисемпе тĕл пулаҫҫĕ

Сентябрĕн 19-мĕшĕнче республикӑра пĕрлехи информаци кунĕ пулать. Пирĕн района ЧР ветеринари службин ертӳҫи В.К. Тихонов ертсе пыракан ушкӑн килет.

Информаци кунĕн теми - ҫитес суйлав, В. Путин пирĕн республикӑна килсе кайни тата республикӑна аталанӑвĕн малашлӑхĕсем.

Районта виҫĕ ушкӑн йĕркелеҫҫĕ. Пĕрремĕшĕ "Свобода" хуҫалӑхра, "Моргаушкорм" предприятире, Ҫатракасси шкулĕпе библиотекинче, Кашмаш шкулĕнче пулать. Иккĕмĕшĕ Суворов ячĕллĕ хуҫалӑх, Турай шкулĕн тата кунти больница ĕҫченĕсемпе тĕл пулать. Виҫҫĕмĕшĕ "Ударник" хуҫалӑх ĕҫченĕсемпе, Йӳҫкасси, Панкли, Вӑрманкасси педагогĕсемпе курнӑҫать.

## Юбилей

# *Саламлатпӑр*

Хисеплĕ те юратнӑ аннене, ӑшӑ кӑмӑллӑ асаннене, хаклӑран та хаклӑ хунямана – Атапай ялĕнче пурӑнакан **Зима Ивановна СУРИКОВАНА** 70 ҫул тултарнӑ ятпа чи ӑшӑ кӑмӑлпа саламлатпӑр.



Ҫирĕп сывлӑхпа телей сунатпӑр, ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳсем пурнӑҫа кĕрсех пычччӑр, мӑнукусенчен ӑнланулӑх ялан ялах пултӑр, ҫывӑх тӑванусем юратӑвĕпе пурӑнма вӑй-хал парса тӑтӑр.

**Ӑшӑ салампа: 2 ывӑлĕ, 2 кинĕ, 4 мӑнукĕ, хӑтисемпе тӑхлачисем.**

Хаклӑран та хаклӑ ҫыннӑмӑра, юратнӑ аппана, йӑмӑка, кумине – Тяпакасси ялĕнче пурӑнакан **Раиса Егоровна КОШКИНАНА** 80 ҫул тултарнӑ ятпа саламлатпӑр, ҫирĕп сывлӑх, ӑнӑҫу, вӑрӑм ĕмĕр сунатпӑр.

Тав сана пуриншĕн те чунтан,
Эсĕ хаклӑ кĕмĕл-ылтӑнран,
Эс пурри пире савӑнтарать,
Пурӑнма ялан вӑй-хал парать.

**Саламлаканĕсем: аппӑшĕ, йӑмӑкĕ, Пихтеровсен ҫемйи.**

Ывӑлӑмӑра – Кашмаш ялĕнче пурӑнакан **Виталий Алексеевич ЗАМЯТИНА**, кинĕмĕре **Екатерина Эрастовнана**, мӑнукӑмӑра **Юрие**, прамӑнука **Димӑна**, хĕрĕме **Вера Алексеевнана** ҫуралнӑ кунĕсем ячĕпе чун-чĕререн тата ӑшшӑн саламлатпӑр, ырлӑх-сывлӑх, ӑнӑҫу, тату пурнӑҫ, ҫемье ӑшши сунатпӑр. Телейĕ пулӑр, утас ҫулӑрсем такӑр пулччӑр, юлташӑрсем те хушӑнсах пычччӑр.

**Салампа: ашшĕпе амӑшĕ, ҫывӑх тӑванĕсем.**